Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**.
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства.

## Автор: Лисина Ева Николаевна

## Книга: Улăхпи

## Рассказ: Халех каятăп!

Хамăр хула урамĕпе пыраттăм. Ай-ай шăрăх – этем чăтмалла мар! Пурте сулхăна пытанаççĕ. Кур-ха, пĕри вĕтелекен шăрăхран хăрамасăр, ним пулман пек урам варрипе ыткăнса пырать. Ара, Çамрăк Юмахçă-çке ку! (Эсир, тен, юмахçă вăл яланах ватă пулакан тетĕр пулĕ, анчах ватти малтан çамрăк пулать, çавăнпа Çамрăк Юмахçă та пулмалла!)

– Итле-ха, – тетĕп ăна, – шăрăх, сывлама та çук!

– Яла каяс пулать, яла! Эп халь çеç пĕр ялтан килтĕм. Ырлăх унта!

– Ялĕ мĕн ятлăскер?

– Мĕнле пултăр – Улăхкасси!

– Хăш килĕнче чарăнса тăма юрать-ши?

Çамрăк Юмахçă малалла талпăнать, вырăнтан хускалнă трамвая çитсех-çитсех пырать, чупнă май мана ăнлантарать:

– Ан пăшăрхан! Унта сана кĕтсех илеççĕ! Паянах кай!

Мĕнех ара! Эпĕ те килелле чуптартăм: карттă çине пăхас-ха – çавăн пек ял пур-и? Пур, пур ун пекки – ытлашши инçех те мар, питех çывăхах та мар, çитме пулать! Халех каятăп!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.